К С(Чув)
Т 81
14419. чув

Илья Тухташ

# Сӑвӑсемпе юрӑсем

## ТӐВАН ÇĔРШЫВ

### Кĕреке юрри

1

Çурхи кунсем вӑраннӑ чух,
Хаваслӑ кун шӑраннӑ чух
Чун савӑнать, чĕрем сикет,
Çĕршыв çинчен юрлас килет.
Тӑван Çĕршыв, Тӑван Çĕршыв!
Асран кайми юратнӑ Çĕршыв!

2

Тӑван уй-хир тумланнӑ чух,
Колхоз тырри хумханнӑ чух
Чун савӑнать, чĕре сикет,
Татах та аван ĕçлес килет.
Тӑван Çĕршыв, Тӑван Çĕршыв!
Никам çĕнми мухтавлӑ Çĕршыв!

3

Тӑвансемпе пĕрлешнĕ чух,
Тулли черкке çĕкленĕ чух
Чун савӑнать, чĕре сикет,
Пĕрле ĕçсе-çиес килет.

Тӑван Ҫӗршыв, Тӑван Ҫӗршыв!
Асран кайми юратнӑ Ҫӗршыв!

4

Хитре хӗрсем юрланӑ чух,
Маттур яшсем ташланӑ чух
Чун савӑнать, чӗре сикет,
Татах та маттур пулас килет.
Тӑван Ҫӗршыв, Тӑван Ҫӗршыв!
Мухтав сана, юратнӑ Ҫӗршыв!

5

Ват стариксем юрланӑ чух,
Тулли креке кӗрленӗ чух
Чун савӑнать, чӗре сикет,
Татах та нумай пурнас килет.
—Тӑван Ҫӗршыв, Тӑван Ҫӗршыв!
Тавах сана, мухтавлӑ Ҫӗршыв!

6

Тӑван Ҫӗршыв мухтавӗпе,
Юратнӑ парти чапӗпе,
Ай, ӗҫер-и, ай, ҫиер-и,
Виличчен пӗрле, ай, пурнар-и...
Тӑван Ҫӗршыв, Тӑван Ҫӗршыв!
Никам ҫӗнми мухтавлӑ Ҫӗршыв!

*1945*